Июнĕн 5-мĕшĕ – Тăван тавралăха хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Тирпейлĕх – малашлăх никĕсĕ

Тĕнчери экономика кризисĕнчен тухса пыратпăр пулин те, тăван тавралăха сыхлассипе пурне те çывăх тăракан çивĕч ыйту кун йĕркинчен тухман-ха. Анчах ăна паян эпир пурте ăнланса илнĕ теме пулать-и-ха? Çак ыйту çине пĕр тăхтаса тăмасăр хурав париччен кашниех хăй пурăнакан тăван тавралăха тишкерсе тухтăр-ха... Çитменлĕхсем куç умĕнчех вĕт! Апла пулсан Тăван тавралăха хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна паллă тăвасси эпир хамăр пурăнакан тавралăха тирпей-илем кĕртессипе çыхăннă. Пĕтĕм тĕнчери тăван тавралăха хӳтĕлемелли кун – Эколог кунĕ. Экологи пирĕн пурнăçра епле вырăн йышăнни пирки калама та кирлĕ мар. Ку вăл пирĕн обществăн малашлăх аталанăвĕн никĕсĕ.

Маларах каланине самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасăр район администрацийĕ, ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, районти шкулсемпе предприятисем тата Муркаш енре пурăнакансем тăван тавралăха сыхлассипе, хамăр тăрăхри экологи тасалăхне тивĕçлĕ шайра тытса тăрассипе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Хăшпĕр ĕçсем республикăшăн та паха опыт пулса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, йăлари хытă каяшсене тирпейлемелли полигон хута кайни **(сăн ӳкерчĕкре)**. Çак кунсенче вăл ĕçлеме пуçлани кĕçех ял тăрăхĕсенчи кашни ял çумĕнчех йышланса кайнă ăпăр-тапăр купаланса тăракан санкцилемен вырăнсенчен хăтăлма пулăшасса шанатпăр. Çакă çывăх малашлăхрах пирĕн культура шайне ӳстересси кашниншĕнех паллă. Анчах вăл пурте пĕрле пулса ĕçлемесĕр çитмĕ. Тăван тавралăха илемлетессишĕн тата ăна хӳтĕлессишĕн пурин те паянах çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнмелле.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю. Ивановăн йышăнăвĕпе район территорийĕнче кашни çуркунне-кĕркуннех йывăç лартмалли уйăхлăхсем ирттерни те тăван еншĕн пĕлтерĕшлĕ. Кунпа пĕрлех ялсене тирпей-илем кĕртессипе çуллен ирттерекен районти конкурс та пирĕншĕн ырă йăлара ĕнтĕ. Вĕсене районти предприятисемпе организацисем, шкулсем, ялсенче пурăнакансем активлă хутшăнни тăван тавралăха хӳтĕлессишĕн кашниех ответлăха туйнине кăтартса парать. Акă йывăç лартассипе кăçал ирттернĕ уйăхлăхра районта 11800 тĕм йывăç лартса хăварма мехел çитертĕмĕр. Кунпа пĕрлех çак уйăхлăхри ĕçсене активлă хутшăнса Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти газонсем илемленчĕç. Ялсенчи палăксемпе обелисксем çĕнĕ тум тăхăнчĕç.



Кăçал çамрăк экологсем «Думай по-зеленому» акци ирттрени те ӳсекен ăру тăван тавралăх пуласлăхĕнче хăйĕн малашлăхне курнине кăтартса пачĕ. Акцие хутшăнакансем 200е яхăн пулчĕç. Вĕсем Муркаш ене татах илемлетесси, Çĕр планетăна сыхласа хăварасси сăмахпа каланинчен ĕçпе çирĕплетни вырăнлăрах пулни пирки каларĕç. Çаксем пурте паллă вăрманçă Б. Гузовский çуралнăранпа 150 çул çитнине паллă тунă май курăмлă ĕçсем пулчĕç.

Тăван тавралăха сыхлассинчен айккинче тăман кашни çынна Тăван тавралăха хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе саламлатăп. Çак кун пĕлтерĕшĕ çултан-çул ӳссе пынинче пирĕн граждансен активлăхĕ аталанни курăнать. Вăл çапла пултăрччĕ те!

**Г. СИМАКОВ,**
**район администрацийĕн çут çанталăка сыхлассипе ĕçлекен специалисчĕ.**

# Илеме упрасси – тимлĕ ĕç




Муркаш урамĕсенче илемлĕ чечексем ешернине курма хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Вĕсем пире çуркуннерен пуçласа сивĕ кĕрчченех савăнтарччăр тесен вара пурин те тăрăшмалла.

Çапла Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин вырăнти специалистсене район центрне тирпей-илем кĕртессишĕн ĕçлеме хавхалантарни Муркаш урамĕсемпе иртсе çӳрекенсене çут çанталăк илемĕ пирки те, çыннăн культура пулмаллине те аса илтерсех тăрать. Пĕрре илеме курма хăнăхнă куç пур вырăнта та тавралăха çак «кантăк витĕрех» пăхать. Район центрĕнчи тĕрлĕ учреждени-организацисенче вăй хуракансем таврана илем кĕртес ĕçе активлă хутшăнни те çакнах кăтартса парать.

Çакă çитĕнекен ăрушăн та тĕслĕх вырăннех пулмалла. Çын мĕн пĕчĕкрен культурăллă обществăра ӳсет пулсан вăл кирек мĕнле вырăнта та хăйне тивĕçлĕ тытма вĕренсе пырать. Кунсерен умра ырă тĕслĕх пулни пурнăçри норма çапла иккеннине ачана та ăнкарса илме май парать. Апла çут çанталăкпа туслă пурăнасси те кашнинченех пысăк тимлĕх ыйтать. Çапла пулсан çеç вăл хăйĕн ырăлăхне кăтартĕ. Темĕн тесен те этем çут çанталăкран вăйсăр. Анчах та юлашки çулсенче хăйĕн «вăйне» кăтартас тесе этем мĕнле кăна ĕç тумасть пулĕ. Вăл хушăра вара çут çанталăка кӳрентерекенни те чылай.

Культура çынран хăйĕнчен пуçланать тетпĕр пулсан çут çанталăка савăнтаракан тирпей-илем те кашни кил-çуртранах пуçланмалла. Хамăр пурăнакан çурт-йĕр таврашĕнче илемлĕ те тирпейлĕ пулни урама та «тухмалла». Урамсем тăрăх та хамăрах çӳретпĕр вĕт. Шел, юлашки вăхăтра «манăн» тени вăй илсе «пирĕн» тенине путарса лартмах пуçларĕ. Хамăрăн лайăх пултăр та, ыттине ... кам мĕнле пĕлет. Чăвашсен ниме йăли ахальтен мар ĕмĕрсем витĕр тухнă. Пысăк ĕç активлăх, пуçарулăх ыйтать-çке-ха. Çут çанталăка упрасси те питĕ пысăк ĕç. Ăна пĕчченниепле те пурнăçлаймăн. Апла мăн асаттеасаннесен йăлине пăрахмалла мар. Хамăрăн



тăван кĕтесе тирпей-илем кĕртессине пурин те хутшăнмалла.

Муркашсен пуçаруçă пурри аван, ытти ялсенче те çак ĕçе малашлăх пирки тарăннăн шутласах туса пырасчĕ. Çут çанталăк хăйне илемлĕ туясси пирĕнтен кашнинченех килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Воспитани ыйтăвĕпе

# Чунра хĕвел шевлисем вылячăр

**Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем... Вĕсем хушшинче сиксе тухакан йывăрлăхсем малтан та, халĕ те актуаллă шутланаççĕ. Агрессивлăх ача пурнăçне пачах та тĕрĕс мар йĕрпе кустарма, унăн пĕтĕм ĕмĕт-пурнăçне çапса хуçма пултарать. Мĕн пĕлмелле ашшĕ-амăшĕн хăйсен ачисем агрессивлă ан пулччăр тесен?**

– Агрессивлăх пушă вырăнта, йĕркеллĕ лару-тăрура сиксе тухмасть. Унăн сăлтавĕсене пĕлмелле, çавсене пĕтерме тăрăшмалла, – тет районти тĕп больницăри психотерапевт, врач-нарколог Л.М. ИВАНОВА. – Чи малтан кунта пирĕн агрессивлăх мĕн иккенне пĕлни кирлĕ. Ачасен агрессивлăхĕ вăл – чуна е ӳт-пĕве ыраттарнă хыççăн ача хăйне мĕнле тытни. Паллах, кашни ашшĕ е амăшĕ ачисем хăйсене пĕр сăмахранах ăнланмалла, тӳрех итлемелле тесе шутлаççĕ.

Ытларах чухне пирĕн пурнăçра мĕнле пулса пыратьха? Ача тӳрех итлемесен е вăл хирĕç каласан, ача çине сас хăпартма пуçлатпăр. Çапла майпа ачан калас шухăшне, кăтартас кăмăлне пусарса хума пулать. Анчах та ку проблемăна татса пани пулмасть. Ача тарăхнине урăх çĕре куçарать: чĕрне кăшлама пуçлать, ыйхи лăпкă мар пулать, е пĕрмаях куçĕсене мăчлаттарма пуçлать. Чунри тарăхăвĕ хăй паянхи лару-тăрупа килĕшме пултарайманнин чашăкĕ ун кайран та «тăкăнма» пултарать. Хăйне ялан кӳрентернине пула вăл ыттисене, йытă-кушака кӳрентерме пултарать.

Ача хăйне канăç паман ыйтусенчен пăрăнас тесе ытларах компьютер умĕнче ирттерме пуçлать вăхăта. Кун пек шутласан, вăл каярахпа çăлăнăçа эрех черккинче е урăх сиенлĕ йăлара та тупма пултарать. Ачана уншăн тухма йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкерни, урăхла каласан, ăна «кĕтесе хĕстерсе хуни» ачана агрессивлă туса хуниех пулать.

**-Мĕн пулма пултарать ачан агрессивлăхĕн сăлтавĕ? Мĕн тумалла ашшĕ-амăшĕн ачан кăмăлсăрлăхĕ агрессивлăха куçса ан кайтăр тесен?**

–Куçăм тапхăрĕ ачашăн ахаль те çăмăл мар. Кирек епле пулăма та вăл çивĕчлетсе йышăнма пултарать. Çавăнпа та вĕсемпе тимлĕ пулмалла. Агрессивлăхăн сăлтавĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Чи малтан çакна астуса тăмалла: агрессивлăх чунра лăпкă мар пулнинчен пуçланать. Ку вара тĕрлĕ сăлтавпа çыхăннă. Ачана пач тимлеменни, пур-çук сăлтавшăнах ăна пĕрмаях вăрçни е пачах урăхла, ăна ытлашшипе тимлĕх уйăрса, хăйне, хăйĕн кăмăлне кăтартма май паманни. Калăпăр, тепĕр чух амăшĕ ашшĕн рольне пурнăçласа ачисемпе ытлашшипех хытă калаçать. Ку та ачара хирĕçтăру туйăмне çуратать. Вăл е ку лару-тăрура хăйне вăйсăр туйни ыттисенчен хăйне «катăк» туйни те ачан чун-чĕринче лăпкăмарлăха çуратать. Çав чунри лăпкă мар лару-тăру вара ăна депресси патне илсе çитерет. Депресси вара агрессивлăха куçать. Çакна манмалла мар – ачана депрессине кĕртсе ӳкермелле мар. Ăна мĕн хумхантарать, çав сăлтавсене пĕтерме тăрăшмалла. Ачана вăл е ку лару-тăру тивĕçтермест пулсан, ăна çав йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентмелле, пулăшмалла. Ачана ăнланма тăрăшмалла. Ăна вăрçсан та вăл хăйне мĕншĕн вăрçнине ăнлантăр. Унсăрăн вăл хăйне, хăйĕн личноçне пусарнă пек йышăнма пултарать. Ахальтен каламаççĕ вĕт хăйне алăра тытма пултаракансем çеç вăйлă шутланаççĕ тесе. Ачасене хăйсен проблемисене çĕнтерме вĕрентмелле.

Ачан çемьере авторитет пулмалла. Килте тĕслĕх илмелли çын çукки уншăн пурнăçăн хаклăхне çухатниех пулать. Çемьери час-час пулакан харкашусем те ачана агрессивлăх патне илсе пыраççĕ.

Сăмаха вĕçленĕ май тепĕр хут çакăн çинчен аса илтерес килет. Агрессивлăх депрессирен пуçланать. Усал пуласси вара чун ыратăвĕнчен пуçланать, çавăнпа та ачасен чунĕ ыратмалла лару-тăру тăвас марччĕ. Çакăн пек каларăш пур халăхра: кашни çынрах хĕвел вырнаçнă. Ăна çутатма çеç майсем туса памалла. Чунра хĕвел пайăркисем выляççĕ пулсан, йывăр шухăшсене валли вырăн çук унта.

**–Тавах, Лариса Меркурьевна, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**




**ФИРМА ЭЛИС ОБ ИЗМЕНЕНИЯХ:**
**ПУТЕВОДИТЕЛЬ ПО КАДРОВЫМ ВОПРОСАМ - НОВЫЙ ИНФОРМАЦИОННЫЙ БАНК В СИСТЕМЕ КОНСУЛЬТАНТПЛЮС**

В мае Справочная Правовая Система КонсультантПлюс пополнится новым Информационным Банком - "Путеводителем по кадровым вопросам". В нем специалисты найдут подробную информацию по вопросам взаимоотношений работодателя и работника - практические рекомендации, формы документов и образцы их заполнения.

Материалы "Путеводителя по кадровым вопросам" сгруппированы по тематике и затрагивают все основные вопросы по кадрам:
- прием на работу;
- перевод на другую должность;
- совмещение должностей;
- аттестация;
- определение рабочего времени и выходных дней;
- материальная ответственность;
- дисциплинарные взыскания;
- командировки;
- отпуск;
- трудовые книжки и многие другие вопросы.

Также расмотрены вопросы оформления труда отдельных категорий работников: лиц с семейными обязанностями, водителей, членов профсоюза и т.д.

Новый Информационный Банк построен по аналогии с другими путеводителями в Системе КонсультантПлюс и содержит пошаговые инструкции действий, практические примеры, все необходимые формы документов по кадровому делопроизводству, образцы их заполнения. В банке освещены не только типичные, но и сложные ситуации и даны рекомендации, как поступить. Тексты путеводителя написаны простым понятным языком, содержат многочисленные ссылки на нормативные акты (Трудовой кодекс, приказы), а также на письма ведомств и судебную практику.

В путеводителе представлены образцы заполнения различных документов - официальных форм, утвержденных Госкомстатом РФ и другими органами, и произвольных: актов, приказов, соглашений, уведомлений и других документов, необходимых для правильной организации кадрового делопроизводства. Образцы заполнения форм содержат конкретные формулировки, примеры записей в трудовые книжки и т.д. Например, все образцы заполнения форм Госкомстата приведены с учетом установленных правил их заполнения, включая правила написания заглавных букв, расположения реквизитов на страницах форм.

Таким образом, в материалах "Путеводителя по кадровым вопросам" буквально по полочкам разложена информация, необходимая специалистам, работающим с кадрами: это полное и доступное изложение различных практических вопросов по этой теме.

Материалы "Путеводителя по кадровым вопросам" будут ежемесячно обновляться, с учетом изменений законодательства. Новый Информационный Банк будет полезен кадровикам, бухгалтерам, руководителям, а также юристам, сопровождающим трудовые споры, и другим специалистам, так или иначе занимающимся кадровыми вопросами.

Информационный Банк "Путеводитель по кадровым вопросам" будет включен в раздел "Финансовые консультации" Системы КонсультантПлюс, который получит новое название - "Финансовые и кадровые консультации". С появлением нового путеводителя в этом разделе будет представлено еще больше информации по вопросам налогообложения, бухгалтерского учета, кадровым вопросам и другим темам.

Более подробную информацию о новом "Путеводителе по кадровым вопросам" в Системе КонсультантПлюс можно получить у сотрудников регионального информационного центра Сети КонсультантПлюс.

**ООО Фирма «Элис» по адресу: г. Чебоксары, ул. Нижегородская, д.4 или по телефонам: 8 (8352) 62-35-15, 62-10-83, «горячая линия» 40-66-07, 40-66-08;**